[illegible]-мěш çул тухать. Хакě 20 пус.

1943
НОЯБРЬ
26
ЭРНЕКУН
233(6470) №

Чăваш Коммуни

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

Чăваш АССР Совнаркомěпе ВКП(б) Обкомěнче

Чăваш АССР-ěнчи колхозсенче хěллехи агротехника ěçěсене туса ирттермелли план çинчен

Çак кунсенче Чăваш АССР Совнаркомěпе ВКП(б) Обкомěн бюровě, Чăваш республикинчи колхозсенче хěллехи агротехника ěçěсене туса ирттермелли план çинчен сӳтсе-явса, çакна палăртнă: республикăри малта пыракан колхозсем, агротехника ěçěсене туса пырса тата вырăнти удобренисемпе туллин усă курса, кăçалхи çул вăйлă тырпул туса илчěç. 1943 çулта пěтěм республикипе уйхире пěлтěрхинчен 1,5 хут ытларах тислěк кăларнă. Советски, Сěнтěр, Элěк, Шупашкар тата ытти хăшпěр районсем уйхире тислěк кăларма туса панă плана чылай ирттерсе тултарнă. Çавăн пекех вырăнти ытти удобренисене те ытларах хатěрлесе вěсемпе ăнăçлă усă курнă.

Çакăнпа пěрлех чылай районсемпе колхозсен руководителěсем агротехникăллă мероприятисем тырпул тухăçлăхне ӳстерес ěçре пысăк вырăн йышăнса тăнине хакламаççě, вырăнти удобренисемпе усă курмаççě, уйхире тислěк, торф, кайăк-кěшěк тислěкěпе кěл хатěрлесе турттармалли, юр тытмалли плансемпе ытти мероприятисене тăтăшах пурнăçа кěртмесěр хăвараççě. Çапла, сăмахран, Кувакино районě тăрăх 1943 çулта уя тислěк кăлармалли плана пěтěмпе те 21,9 процент, Пăрачкав районě тăрăх — 33,5 процент, Шăмăршă районě тăрăх — 47,6 процент чухлě кăна пурнăçланă. Çакна пула çав районсенчи колхозсем начар тырпул туса илнě.

Чăваш АССР Совнаркомěпе ВКП(б) Обкомěн бюровě çапла тума йышăннă:

Чăваш республикинчи колхозсенче 1943—44-мěш çулхи хěллехи вăхăтра агортехникăллă мероприятисем туса ирттермелли плана çирěплетес тата кашни района тислěк пухса уя турттармалли, торф хатěрлесе турттармалли, кěл пухмалли, кайăк-кěшěк тислěкě пухмалли, вăрлăх сортламалли тата юр тытса хăвармалли план парас.

Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомěсене пилěк кунлăх срокра хěллехи агротехникăллă мероприятисен планне колхозсене çитерме, колхозсенче вара—уйхир ěç бригадисем патне çитерме тата çав плана пěр пăркаланмасăрах пурнăçа кěртмелле тума хушас.

Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомěсене колхозсенче вырăнти удобренисем мěнле те пулин ытларах пухса, вěсемпе туллин усă курас тěлěшпе пур мерăсене те йышăнма хушас. Çав шутпа çак ěçсене туса ирттермелле:

а) колхозсенче кашни выльăх-чěрлěх фермине тата лаша витине тислěк пухса хатěрлес тěлěшпе задани памалла;

б) тислěке ăçта турттармаллине малтанах палăртса хурса, ăна выльăх витисемпе лаша витисенчен уя кулленех турттарса тăрассине организацилемелле. Тислěке уй тăрăх вак-тěвек купасемпе салатса пăрахма чарас пулать, ăна пěр çěре турттарса пысăк купасем туса хумалла;

в) колхозниксен килěсенче мěнле те пулин ытларах тислěк пухассишěн тăрăшмалла, çавăнпа та колхозниксене выльăх-чěрлěх айне сарма улăмпа торф памалла, вěсене уя тислěк турттарма лашасем парса тăмалла;

г) обществăллă çуртсенче, шкулсемпе больницăсенче, клубсенче, çавăн пекех тата колхозниксен çурчěсенче те кěл пухассине организацилемелле. Кашни уйхир бригадинчех кěл пухакансене уйăрса çирěплетмелле, пухнă кěле усрама ятарласа çуртсем тупса памалла;

д) кайăк-кěшěк фермисене кайăк-кěшěк тислěкě пухмалли заданисем памалла, çавăн пекех тата кайăк-кěшěк тислěкне колхозниксен килěсенче пухассине те йěркелемелле. Хěллехи вăхăтра пухнă кайăк-кěшěк тислěкне, çуркунне калчасене апат пама хатěрлесе çитерес шутпа, типěтсе тата вěтетсе хумалла;

е) кашни уйхир бригадинче торф хатěрлесе турттарас тěлěшпе ěçлеме ятарласа колхозниксен ушкăнне уйăрмалла, вěсене лашасем уйăрса памалла;

ж) тислěкпе торф хатěрлесе турттарнипе, кěлпе кайăк-кěшěк тислěкě пухнипе пěрлех, колхозсенче уйхире фекали, çырма юшкăнě турттарассине организацилемелле. Турттарнă мěнпур фекалипе компостсем хатěрленě çěрте усă курмалла.

Колхоз правленийěсене çапла тума сěнес: тислěк пухса, ăна тěрěс пăхса усрас ěçе лайăх организациленě аслă конюхсене тата выльăх-чěрлěх фермисен заведующийěсене хавхалантарас шутпа, çулталăк вěçленнě чухне вěсене 20-шер ěçкунě шутласа памалла.

Обществăллă выльăх-чěрлěхе пăхакан колхозниксене пухса хатěрленě тислěкěн кашни тоннишěн 0,5 ěçкунěнчен пуçласа 1 ěçкунě таран шутласа памалла.

Харпăрхăй килěнчи выльăх-чěрлěхрен пухăннă тислěке колхоза паракан колхозниксене кашни тоннăшăн 2—3-шер ěçкунě памалла.

Çакăнпа пěрлех вырăнти удобренисене пухса колхоза парăшăн колхозниксене çакăн пек тӳлемелле тума сěнес: пěр центнер кěлшěн — 1 — 1,5 ěçкунě, пěр центнер кайăк-кěшěк тислěкěшěн — 2 — 2,5 ěçкунě памалла.

Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомěсене тата çěрěç органěсене çакăн çине çавăрăнса пăхма сěнес: кăçалхи кěркунне çăмăр питех те сахал çунă пирки, тăпрара нӳрлěх сыхласа хăварас тěлěшпе уйхирте юр тытни уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать, çавăн пекех тата уйхирте юр тытни кěрхи тырăсен калчисемпе нумай çул хушши ӳсекен курăксене шăнса пěтесрен сыхласа хăварма пулăшать. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомěсен вăйлă тырпул туса илес ěçре çав мероприяти пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен колхозниксене тěплěн ăнлантарса памалла, мěнпур колхозсенче юр тытас ěçе, уйрăмах кěрхи тырăсемпе нумай çул хушши ӳсекен курăксем акнă вырăнсенче, çавăн пекех тата килес çуркунне çуртырăрисем акмалли çӳллě вырăнсенче, юр тытса хăварас ěçе халех сарса ямалла. Çав шутпа мěнпур уйхир бригадисемпе звеносенче юр тытмалли кивě щитсене юсас тата вěсене çěнěрен тăвас ěçе организацилемелле. Щитсем тунă çěрте çапăпа тата улăмпа усă курмалла. Щитсене уйра малтанах лартса тухмалла, юр пухăнса пынă май вěсене тăтăшах вырăнтан вырăна куçарса тăмалла. Çавăн пекех тата юр тытма уйхирте хырпа чăрăш тураттисем пăрахса тухмалла, тăтăшах пěр енчен вěрекен çилсене хирěçле юр куписем туса тухмалла.

Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомěсене пěлтěрхи йăнăшсенчен сыхланма кирли çинчен асăрхаттарас. Иртнě çул хăшпěр колхозсем вăрлăхсем хывса хăварас, вěсене сортласа тасатас тата вěсен пахалăхне вăрлăхсене тěрěслекен лабораторисем урлă тěрěслеттерес ěçе кая хăварчěç те вăрса таса мар тата начар шăтакан вăрлăхсем акса хăварчěç, çакă вăл тырпулсен тухăçлăхне чылай чакарасси патне илсе пычě.

Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомěсене кашни колхозра вăрлăхсем хывас тата вěсене çуракине хатěрлес ěçсем мěнле пынине халех тěрěслесе тухма хушас. Вăрлăхсем тасатас ěçе лайăх организацилемелле, çак ěçе тума ятарласа бригадăсемпе звеносем уйăрмалла, вěсене ертсе пыма правлени членěсенчен, коммунистсемпе комсомолецсенчен тивěçлě çынсене уйăрса лартмалла.

Вăрлăхсене хывас, тасатса сортлас, çавăн пекех тата вěсене вăрлăх тěрěслемелли лабораторисенче тěрěслеттерес мěнпур ěçсене январěн 1-мěшěнчен кая юлмасăр туса ěлкěртмелле.

Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомěсене хěллехи агротехникăллă мероприятисен планне пурнăçа кěртессишěн тата ирттерсе пурнăçа кěртессишěн колхозсем, уйхир бригадисем тата колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма хушас. Колхозсенче агротехникăллă мероприятисене пурнăçа кěртес тěлěшпе бригадăсемпе звеносем тата колхозниксем мěнле ěçленине кăтартакан хăмасем организацилемелле, çак ěç мěнле пынине районри хаçатсемпе стена хаçачěсенче анлăн çутатса тăмалла.

Вырăнти удобренисене хатěрлесе турттарас, юр тытса хăварас тата вăрлăхсене çуракине хатěрлесе çитерес тěлěшпе мěнпур колхозсенче 1943 çулхи декабрěн 1-мěшěнчен пуçласа 1944 çулхи январěн 1-мěшне çитиччен уйăхлăх туса ирттерес.

Днепр çинчи çапăçусен геройне—мухтав!

Пирěн паттăр земляка—гварди ефрейторне И. К. Поляков юлташа Совет Союз Геройěн званине панă

Гварди ефрейторě Иван Кузьмич Поляков 20 çула та çитмен-ха. Çěмěрле районěнчи Тури Кăмашара 1924 çулта çуралнă вăл. Анат Кăмашари вăтам шкултан вěренсе тухнă.

... 1941 çул. Питě лайăх, питě хитре çу кунěсем. Уйхирсенче вăйлă тырпул кашласа ларнă. Фабрикăсемпе заводсем ěлěкхинчен ик-виçě хут ытларах продукци кăларса тăнă. Эпир пурте, ырăнхи кунăн ытарайми çуттипе çуталса, Сталин юратăвне туйса тăрса, хамăр телее туптаса пурăннă.

Анчах эпир савăнса пултарулăн ěçленě вăхăтра вăрçă сиксе тухрě.

Поляков икě пиччěшне — Василипе Михаила — фронта ăсатнă. Кăшт тăхтасан, хăйне те Хěрлě Çара кайма черет çитнě. Ăна Краснодарти çар училищине янă. Унтан вăл, фронт çывхарса килнине пула, вěренсе пěтермесěрех фронта тухса кайнă.

Иван Кузьмич Поляков фашистла захватчиксем Кубаньре вут тěртнě тулă пуссисем çуннине курнă. Нимěçсемпе итальянецсем тата румынсемпе венгерецсем ишěлтернě хуласемпе станицăсем витěр тухнă. Гитлеровецсем асаплантарса вěлернě совет çыннисен виллисем умěнче вăл гитлеровецсене тавăрма тупа тунă. Иван Поляков хаяр çапăçусенче пиçěхсе çитěннě. Хастарлă чăваш ачи опытлă çирěп воин пулса тăнă.

Пěлтěрхи декабрьте Поляков Сталинграда пынă. Унта вăл Атăлăн хурçă крепоçне мухтавлăн хӳтěлекенсемпе пěрле тăшманăн чи лайăх çарěсен группировкине пěтернě.

Вăрçă тем пысăкěш хум пек шавласа хěвеланăçнелле куçса пынă. Гитлерла вăрă-хурахсен кěтěвне хăваласа, Иван Поляков Хěрлě Çарпа пěрле Атăлтан пуçласа Днепр шывě патне çитиччен кайнă.

Совет воинěсен куçне Днепр шыве курăнса кайнă. Сарлака, илемлě Днепр! Унăн шывě Хура тинěс патнелле лăпкăн юхса выртнă.

Днепр çинче — тěттěм каç. Вăрçă пěтнě чухнехи пекех, Днепрăн сылтăм хěррин пуш-пушах пек туйăннă, тěнчере кичемлě шăплăх пулса тăнă пек туйăннă.

Çав каç гвардеецсен пирвайхи отрячěсем Днепр шывě урлă каçнă. Вěсенчен пěринче Иван Поляков пулнă. Шыв урлă каçакан боецсене асăрхасан, нимěçсен пулемечěсем çěрлехи шăплăха çурса янă. Çапăçу кěрлесе кайнă. Днепр шывěн сылтăм енчи пěрремěш çапăçу!

Иван Поляков ăнăçлăн çыран хěррине тухнă та, ун умне пěр питě пысăк нимěç салтакě тухса тăнă. Поляков хăйěн автоматне çирěппрех тытнă, çав вăрă-хураха персе вěлернě. Часах вăл тепěр фрица лешь тěнчене ăсатнă.

Çапăçу вăйланнăçемěн вăйланса пынă. Пирěннисенчен йышлăрах тăшман контратака хыççăн контратака тунă, анчах та хăюллă гвардеецсем пенине чăтаймасăр, кашни хутěнчех каялла чакнă. Днепр шывěн сылтăм енче темиçе çěр нимěç вилли выртнă. Гвардеецсем хăйсем тытса илнě плацдарма утăм хыççăн утăм аслăлатса пынă.

Гварди ефрейторě Поляков тăшман позицийěсем патне вăрттăн шуса пырса, тăшманăн персе тăракан икě точкине ручной гранатăсемпе пěтерсе хунă.

... Кăçалхи Октябрěн 27-мěшěнче çěршыври мěнпур хаçатсенче СССР Верховный Совет Президиумěн Указне пичетлесе кăларнă, çав Указра Днепр шывěн сылтăм енчи Украинăшăн чи малтан çапăçнă боецсене Совет Союз Геройěн званине парасси çинчен каланă. Генералсен, офицерсен, сержантсен, рядовойсен Совет çěршывěнчи мěнпур халăхсен ывăлěсен хушамачěсем хушшинче пирěн землякăн—гварди ефрейторěн Иван Кузьмич Поляковăн ячě те пур.

Днепр çинчи çапăçусен улăп-паттăрне, пирěн чаплă земляка Совет Союзěн Геройне Иван Кузьмич Полякова хěрӳллě салам!

Тырпул—пирěн хăват

Государствăна тыра сутса, тăван çěршыв вăйне татах та ытларах ӳстерер!

„Тăшмана сывлăш çавăрса илме парар мар!"

Çěрпӳ районěнчи колхозсем государствăна 103.883 пăт тыра сутнă

ÇĚРПӲ, ноябрěн 25-мěшě. **(Телефонпа).** Халăхсен çутпуçě Сталин юлташ — çěнтерӳ çывăх ěнтě, анчах ăна алла çавăрса илес тесен çěнěрен ытларах вăй хуни, пěтěм тыл хăйне хăй шеллемесěр ěçлени кирлě — тесе калани ěççыннисен куллěнхи лозунгě пулса тăчě. Пирěн районри ěççыннисем фронта ытларах пулăшас шутпа, пěтěм вăй-хăвата хурса ěçлеççě, çěнтерӳшěн нимěн те шеллемеççě.

Районри колхозсенче халě государствăна тыра сутас ěç пысăк çěкленӳпе пулса пырать. Шăмашар колхозěн членěсем, хăйсен пухăвěнче пурте пěр кăмăлпа государствăна тыра сутма пулса, — эпир тăшмана сывлăш çавăрса иличчен çěмěрсе тăкма Хěрлě Çара мěн кирлине пурне те паратпăр, терěç. Колхоз государствăна 720 пăт тыра сутрě. Колхозниксем хăйсем перекетленě тырра 450 пăт сутаççě. Колхоз председателě Ильин юлташ 30 пăт, колхозниксем И. Ефимов — 30 пăт, М. Григорьев—25 пăт, А. Тимофеева—25 пăт сутрěç.

Лěпсер ялсоветěнчи колхозсенче те государствăна тыра сутасси патриотизмлă çěкленӳпе пулса пырать. Вěсем государствăна сутнă тырра хěрлě обозсемпе хатěрлев пункчěсене леçсе параççě. Паян государствăна тыра леçме 25 лавлă хěрлě обоз организациленě.

«Сталинцы» колхоз государствăна 1.800 пăт, «Красный бригадир» колхоз 1.020 пăт тыра сутнă, «Красный Октябрь» колхоз членěсем сутнă тырра çийěнчех хатěрлев пунктне леçсе параççě.

Паянхи куна районри колхозсем государствăна 103.883 пăт тыра сутнă. Колхозниксемпе колхозницăсем пурě 3.008 çын хăйсен хуçалăхěнче перекетленě тырра государствăна сутнă.

Д. МИТЬКОВ,
ВКП(б) райкомěн секретарě.

Колхозлă ялăн çулăмлă патриочěсем

СОВЕТСКОЕ, ноябрěн 25-мěшě. **(Телефонпа).** Районри колхозсем паянхи куна государствăна 91.620 пăт тыра сутрěç. Нумай колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен пысăк патриотлăхне кăтартса параççě. Степан Разин ячěпе тăракан колхоз государствăна 4.860 пăт тыра сутнă. Ку колхоз председателě Андреев юлташ хăйěн тыррине 50 пăт, унăн заместителě Кузьмин юлташ 30 пăт, колхозница Ершова юлташ 20 пăт сутнă.

Государствăна тыра сутасси «Первое мая» колхозра пысăк активлăхпа иртрě. Унта колхоз председателě Афанасьев юлташ 60 пăт, счетовод И. Павлов юлташ 38 пăт, колхозниксем Ф. Иванов—50 пăт, Ф. Григорьев—39 пăт, С. Миронова—28 пăт, П. Кондратьев—38 пăт, П. Волкова—44 пăт сутнă. 10-шар пăт сутакансем татах та нумай пулчěç.

«Новая победа» колхоз бригадирě С. Семенов юлташ (унăн виçě ывăлě фронтра) 60 пăт, «Сеятель» колхоз председателě Н. Андреев юлташ 80 пăт сутнă.

Районри колхозсенче государствăна тыра сутасси пысăк çěкленӳпе пулса пырать.

П. НИКИТИН,
ВКП(б) райкомěн секретарě.

Государствăна тыра сутакансене — промышленность таварěсем

Государствăна тыра тата çěрулми сутакансене сутмашкăн Чăваш республикинчи потребкоопераци промышленность таварěсем темиçе вунă миллион тенкěлěх кӳрсе килет, вěсенчен пěр пайне халě складсене кӳрсе килнě те ěнтě.

Уйрăмăн илсен, ялсенчи потребительсен обществисем урлă пир-авăр таварěсем 8.830 пин тенкěлěх, çăмăран е пурçăнран тěртнě пусма таварсем 5,5 миллион тенкěлěх ытла, чăлхасем, тутăрсем, çиpсем, çыхнă япаласем, 3 миллион тенкěлěхе яхăн, чей-сахăр, тěрлěрен апат-çимěç 2,9 миллион тенкěлěх сутаççě.

Кунсăр пуçне çак ěç валли краççын—2.800 пин тенкěлěх, тăвар — пěр миллион тенкěлěх, супăнь тата ытти таварсем — 785 пин тенкěлěх сутма уйăрса хунă

Сутнă тырра хатěрлев пунктне леçеççě

ХĚРЛĚ ЧУТАЙ. Перекетленě тырра государствăна сутас ěç районри колхозсенче кунран кунах ӳссе пырать. Ноябрěн 24-мěшě тěлне 22.140 пăт сутнă, вăл шутран 1.748 пăт хатěрлев пунктне леçсе панă. «Коминтерн» колхоз председателě Кузнецов юлташ 20 пăт, Чапаев ячěпе тăракан колхоз председателě Васильев юлташ 12 пăт тыра сутрěç. Çавăн пекех ытти колхоз членěсем те государствăна вуншар пăт тыра сутрěç.

Совет Информаци Бюровěнчен

НОЯБРĚН 23-МĚШĚНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрěн 23-мěшěнче пирěн çарсем ДНЕПР шывěн кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСКРАН кăнтăр-хěвеланăçнерехре, çаплах тěллěн-тěллěн çапăçса пынă, тăшмантан вăйлă çирěплетнě СТАВРАКИ, КРИНИЧКИ, ЛЕНОВКА, КОДАК, МАРЬЕ-ДМИТРОВКА, КОВАЛЕВО, КРАСНЫЙ ЯР, КРАСНОЕ ПОЛЕ, АЛЕКСАНДРОВКА, НЕЗАБУДИНА ятлă пунктсене тытса илнě.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен кăнтăртарахра пирěн çарсем вăйлăн çапăçнă хыççăн тăшмантан КАМЕННО-ПОТОЦКОЕ, ТУРКЕСТАНОВКА, МАВРОДЕЕВКА, ПОПОВКА, ВАСИЛЬЕВКА, ПАРНЫ, ШЕВЧЕНКОВСКИЙ, БЕРЕЗОВКА ятлă пунктсене тата ЛЕКАРЕВКА ятлă чугун çул станцине тытса илнě.

ЧЕРНЯХОВ тата БРУСИЛОВ районěсенче пирěн çарсем тăшман пехотипе танкěсен пысăк вăйěсен атакисене сире-сире янă, нимěçсене çынсемпе техника енчен пысăк çухату кӳнě. Тăшман хěснипе пирěн çарсем халăх пурăнакан темиçе пункта хăварнă.

ПРИПЯТЬ шывěн анат тăрăхěнчи районра пирěн çарсем Полесье облаçěнчи БРАГИН ятлă район центрне тытса илнě, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăнса илнě, вěсен шутěнче ВЕЛИКИЙ БОР, МИХНОВКА, НОВЫЙ ПУТЬ, ШКУРАТЫ, ДУБЛИН, ПЕТЬКОВЩИНА, ЖЕРДНОЕ, ПЕРЕСЯТИНЕЦ, КУЛАЖИН, КРЮКИ, МАШЕВО, МОССАНЫ, ДОВЛЯДЫ, ПРОХОЖА ятлă пысăк ялсене.

РЕЧИЦА хулинчен хěвеланăçнерехри районра пирěн çарсем темиçе ял тытса илнě.

ГОМЕЛЬ хулинчен çурçěртерехре пирěн çарсем СОЖ шывěн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă, хăйсен позицийěсене лайăхлатнă.

Фронтăн ытти участокěсенче разведка тунă тата тăшмана хирěç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Ноябрěн 22-мěшěнче пирěн çарсем мěнпур фронтсенче нимěçсен 182 танкне персе çěмěрнě е пěтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çӳлелле перекен артиллери тăшманăн 67 самолетне персе ӳкернě.

НОЯБРĚН 24-МĚШĚНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрěн 24-мěшěнче пирěн çарсем КРЕМЕНЧУГ хулинчен кăнтăртарахри районра Кировоград облаçěнчи ОНУФРИЕВКА ятлă район центрне тытса илнě, çавăн пекех тата НОВОЕКАТЕРИНОВКА, ДОБРОПОЛЬ, КОНСТАНИНОВКА ялěсене йышăнса илнě.

ЧЕРНЯХОВ тата БРУСИЛОВ районěсенче пирěн çарсем тăшман атакисене ăнăçлăн сире-сире янă, хăйсен позицийěсене лайăхлатнă.

ПРИПЯТЬ шывěн анат тăрăхěнчи районра пирěн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Полесье облаçěнчи ХОЙНИКИ ятлă район центрне тытса илнě, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăнса илнě, вěсен шутěнче МУТИЖАР, РУДОЛЬЕВКА, НЕБЫТОВ, КЛЕВЫ, ПОСЕЛИЧИ, БОРИСОВЩИНА, ХРАПКОВ, ДВОРИЩЕ, РУДНОЕ, ГУБАРЕВИЧИ, РУДАКОВ, БАБЧИН, ОСТРОГЛЯДЫ, ВОРОТЕЦ, ЗАТУЧА, НОВЫЙ РАДИН, СТАРЫЙ РАДИН, БОРЩОВКА, КРАСНОСЕЛЬЕ, ДЕРНОВИЧИ ятлă пысăк ялсене.

РЕЧИЦА хулинчен хěвеланăçнерехри районра пирěн çарсем малалла куçнă, темиçе ял тытса илнě.

ГОМЕЛЬ хулинчен çурçěртерехре пирěн çарсем çаплах СОЖ шывěн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă, хăйсен позицийěсене лайăхлатнă.

Фронтăн ытти участокěсенче разведка тунă тата тăшмана хирěç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Ноябрěн 23-мěшěнче пирěн çарсем мěнпур фронтсенче нимěçсен 62 танкне персе çěмěрнě е пěтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çӳлелле перекен артиллери тăшманăн 5 самолетне персе ӳкернě.

* * *

Кременчуг хулинчен кăнтăртарахри районра пěр соединени чаçěсем малалла куçнă та хăюллă атака туса, тăшманăн хирěç тăмалли пысăк тěвввине — Кировоград облаçěнчи Онуфриевка ятлă район центрне тытса илнě. Онуфриевкăшăн тата халăх пурăнакан ытти пунктсемшěн пынă çапăçусенче пирěн чаçсем нимěçсен 1.000 салтакěпе офицерне ытла пěтерсе тăкнă, тăшманăн 30 танкне çунтарса янă е персе çěмěрнě. Трофейăсем тытса илнě, вěсен шутěнче — 28 тупăпа миномет, 60 пулемет тата çар япалисен 3 склачě. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Черняхов тата Брусилов районěсенче пирěн çарсем тăшман пехотипе танкěсен пысăк вăйěсен атакисене ăнăçлăн сире-сире янă. Нимěçсем пирěн оборонăна савăлланса кěме хăтланнисем пурте пăчланса ларнă. Пирěн артиллеристсем, пехотинецсем тата танкистсем, тăшман атакисене сире-сире ярса, нимěçсене пысăк çухату кӳнě, хăйсен позицийěсене лайăхлатнă. Кун каçиччен нимěçсен 32 танкне пěтерсе тăкнă тата вěсен пехотине пěр полка çити вěлерсе пěтернě.

* * *

Припять шывěн анат тăрăхěнчи районра пирěн çарсем çаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла тытса илнě. Пěр соединени чаçěсем тăшман хирěç тăнине çěмěрсе тăкнă та (вăл пěр хушăри вырăнта чарăнса тăма хăтланнă пулнă) Полесье облаçěнчи район центрне — Хойники хулине тытса илнě. 800 гитлеровеца ытла пěтерсе тăкнă. Темиçе артиллери батарейи тата ултă кěпçеллě 3 миномет тытса илнě.

* * *

Речица хулинчен хěвеланăçнерехри районра пирěн çăмăллăн куçакан чаçсем пěр шыв урлă каçнă та, вирлěн пырса çапса, темиçе ял тытса илнě. Тепěр участокра пěр соединени чаçěсем гитлеровецсен пěр батальонне пěтерсе тăкнă. Пěр бронетранспортер, 25 автомашина тата çар хатěрěсем турттарса пыракан нумай лав тытса илнě.

* * *

Гомель хулинчен çурçěртерехре пирěн çарсем хаяр çапăçу хыççăн нимěçсене вăйлă çирěплетнě позицисенчен çапса кăларнă. Тăшман

(Вěçě 2-мěш страницăра)

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

темиçе хутчен те контратакăсем тунă, анчах та вĕсем пĕри те ăнăçлă пулман. Çав çапăçусенче нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хура тинĕсре тăшманăн 2.600 тонна таякан суднине, хăвăрт çÿрекен десант баржине тата танксемпе пехота илсе пыракан 2 понтонне (хăй тĕлĕн çÿрекеннисене) шыва путарнă.

* * *

Пинск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ юлашки кунсенче нимĕçсен фронталла пыракан икĕ çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче 2 паровоз, автомашинăсем турттарса пыракан 5 платформа, бензин тултарнă 12 цистерна тата 16 класнăй вагон çĕмĕрĕлнĕ. Унсăр пуçне, партизансем 110 метр тăршшĕ чугун çул линине пăснă, пĕр кĕпере сирпĕнтерсе янă. Чугун çулăн çав участокĕнче вара поездсем çÿресси нумайлăха чарăнсаларнă.

* * *

Нимĕçсен 14-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 53-мĕш полкăн 1-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Алоиз Потокор çапла калаcа кăтартнă: «Мана çара тотальнăй мобилизаци тăрăх 1943 çулхи июнь уйăхĕнче хыççăн унта разведка тăвакан 252-мĕш дивизионри велосипед эскадроне илчĕç. Ку дивизион Вăтаçĕр тинĕс çыранĕнче сыхласа тăратчĕ. Эпир Марсель, Тулон, Авиньон, Жемено районĕсене сыхласа тăтăмăр. Эпир юлашки вăхăтра тăнă районра—Женевора—Итали чиккине тăратчĕ. Сентябрь уйăхĕнче пирĕн эскадрон тата нимĕçсен ытти подразделенийĕсем те итальянецсен лагерĕсене хураллама мачĕç те Итали салтакĕсемпе офицерĕсене пурне те ухтарса тухрĕç, вĕсен мĕнпур хĕçпăшалне тытса илчĕç, вĕсене пурне те тыткăнри çынсем тесе пĕлтерчĕç. Унтан вара çав итальянецсене вагонсем çине лартрĕç те çурçĕрелле илсе кайрĕç. Сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче нимĕç командованийĕ салтаксене пĕр пысăк ушкăна уйăрса илчĕ. Çав ушкăна эпĕ те лекрĕм. Ку вара маршевой батальон пулса тăчĕ. Батальона часах Хĕвелтухăç фронтне ячĕç. Пире пĕтĕм çул тăршшĕпех нимĕçсен аманнă салтакĕсен эшелонĕсем тĕл пулса пычĕç. Çав салтаксенчен нумайĕшĕ пĕтĕм тĕнчене ылханса ятлаçрĕç, пире вырăссене тыткăна парăнма канаш пачĕç».

* * *

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакма пуçласан, нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Смоленск облаçĕнчи Отодолищенски районри ялсене питĕ пысăк сиен кÿрсе хăварнă. Сторино ялĕнче гитлеровецсем 48 хуçалăха тĕппипех çунтарса янă. Нимĕç вăрă-хурахĕсем ялхуçалăх инвентарьне пĕтĕмпех пĕтерсе лартнă, хресченсен пур хаклă япалисене те тытса илнĕ, тумтирсемпе хуçалăхра кирлĕ япаласене нимĕн те хăварман. Гитлеровецсем вырăнти халăха пĕтĕмпех хăйсемпе пĕрле тыла хăваласа кайма пуçланă. Нимĕçсен чуралăхне лексессен хăтăлас тесе ... Семиново ялĕнче гитлеровецсем 25 пÿрт тата колхозăн 17 хуралтине çунтарса янă. Васьково ялĕнче фашистла ирсĕрсем 108 пÿртпе хуралта пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем кунти çынсене мĕнпур тумтирпе урана тăхăнмалли япалисене илсе кайма пултарайманнине гитлеровецсем пĕтмелĕх çунтарса янă.

Донбасри профорганизацисене пулăшасси çинчен

ВЦСПС секретариачĕ пирĕн çĕршывăри мĕнпур профессилĕ организацисене Донбасри культура, спорт тата пурнăçла пăла учрежденийĕсене çĕнĕрен уя çине тăратас ĕçре Пĕтĕм Союзри кочегарăран шахтерсене, металлургсене, химиксене, железнодорожниксене тата мĕнпур ĕççыннисене пулăшма хушнă. Промышленноçпа предприятийĕсем Донбасри шахтăсене заводсене шефа илес ĕçе (оборудовани, инструментсем, материалсем пухса парас ĕçе) профсоюзсен Центральнăй Комитечĕсен аппаратне çирĕплетнĕ. Донбасри профсоюз организацийĕсене çĕнĕрен пухса тата культурăпа спорт инвентарĕ—кĕнекесем, музыка инструменчĕсем, кинопа радио аппаратури, гимнастика оборудованийĕ, пĕлтерсем тата ытти япаласем те ямалла.

ВЦСПС-ăн культурăллă-массăллă отделĕ 100 библиотека тумашкăн Донбаса 40 пин кĕнеке ярать, çав шутран шахтăсенче 70 библиотека, металлурги завочĕсенче 20 библиотека, электростанцисенче 10 библиотека пулмалла. Кунсăр пуçне, Донбасри çĕркăмрăк промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен профсоюзĕ, Кăнтăрти хура металлургире ĕçлекен рабочисен профсоюзĕ тата электростанцисенче ĕçлекен рабочисен профсоюзĕ Центральнăй клубсемпе хĕрлĕ кĕтессене çĕнĕрен уя çине тăратмашкăн декабрĕн 15-мĕшĕнчен Донбаса электричество оборудованийĕ, радиоустановкăсем, пир-авăр тавраш тата ытти материалсем ярассĕ.

Сталино облаçĕнче Ворошиловград облаçĕнче 300 çын валли сыватмалли çурт уçма тата туберкулезпа чирлекенсем валли 200 çын вырнаçмалли санаторисем уçма йышăннă. (ТАСС)

Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейине 3 миллиард та 339 миллион тенкĕлĕх çырăнса илнĕ

Октябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 15-мĕшĕ çитиччен укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейине 3 миллиард та 339 миллион тенкĕлĕх çырăнса илнĕ. Хуласенчи халăх пĕр миллиард та 360 миллион тенкĕлĕх çырăннă, колхоз хресченĕсем пĕр миллиард та 979 миллион тенкĕлĕх çырăннă. Çапла вара, лотерея билечĕсем малтан палăртса хунă 2 миллиард та 500 миллион тенкĕ вырăнне 839 миллион тенкĕлĕх ытларах сарăлнă. Ноябрĕн 15-мĕшĕнчен перекет кассисем лотерея билечĕсен укçи 2 миллиард та 96 миллион тенкĕ пухăннă, вăл шутран пĕр миллиард та 631 миллион тенкĕ хресченсем тÿлесе татнă. (ТАСС).

Хĕрлĕ Хĕрес обществин пĕтĕм Российăри канашлăвĕ

Мускавра Хĕрлĕ Хĕрес обществин облаçсемпе крайсенчи комитечĕсен председателĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ.

Хĕрлĕ Хĕрес обществи çак вăрçă вăхăтĕнче медицина сестрисемпе санитари дружинницисене темиçе çĕр пин çын хатĕрленĕ. Ĕççыннисен 11 миллион çын ытла «Готов к санитарной обороне» значока илме нормăсене панă. Ĕççыннисене хăйсен сывлăхĕсене сыхлама пулăшакан активистсем ... донорсем тăвас тĕлĕшпе нумай ĕçленĕ. Çавăн пекех тата тыла санитарипе профилактика тăвас ĕçре пысăк пулăшу парать. Халĕ обществăн умне çакăн пек задача тăрать: ... медицина сестрисемпе санитари дружинницисене хатĕрлес ĕçе тата ... сарса ямалла, медицина сестрисемпе санитари дружинницисене ... пиринчен малтан нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене валли хатĕрлемелле.

Шкул пулăшăвĕ

Мускав облаçĕнчи Ленински районри Борисовски ватам шкулта вĕренекенсем ирĕке тухнă районсенчи ачасене пулăшмалли фонда тăваççĕ. Шкул ачисем ... учебниксене тетрадьсем, карандашсем, ручкăсем, географи картисем тата вĕреннĕ чухне кирлĕ пулакан ытти япаласем чиксе 40 посылка ытла янă.

Кашни вĕренекенех çав фонд валли хăй колхозра ĕçлесе тунă ĕçкунĕсенчен ... ĕçкунĕ уйăрса панă.

Борисовски шкулти ачасен пуçарăвне облаçри мĕнпур шкулсем ... хапăл туса йышăннă. (ТАСС).

Суракине тĕплĕн хатĕрлеме тытăнчĕç

ЭЛЕК. (Хамăр корр.). Вăрмантакри Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем ... хывса çитерме тытăннă. Ялхуçалăх ... ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ... юлашки вăхăтра ...

Сомушкăнри «Красное Сормово» колхозра Сталин юлташăн докладне сÿтсе-явса ... суракине хатĕрлесе ... государствăна сĕт-çу, аш-какай планран иртерсе пама пулчĕ.

... ялсоветĕнчи колхозсем государствăна 1943 çулта тырă памалли плана 106 процент тултарнă. Сталин юлташ докладне хавхаланса, ку ялсоветĕнчи колхозсем халĕ государствăна ... тата 100-шер тырă тата аш-какай ... пама пулчĕç.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парторганизаци секретарĕ

Ана час-часах колхозсенче курма пулать. Максим Алексеевич иккĕмĕш çул ĕнтĕ Советски ялсовет председателĕ пулса ĕçлет, çав вăхăтрах территориллĕ пуçламĕш парторганизацие ертсе пырать. Вăл пысăк та ответлă ĕçре.

Ялсоветĕнче 7 колхоз, вĕсем пурте райцентр тавра сапаланса ларнă. Иртнĕ çулсенче районри руководительсем хушшинче кунти колхозсем юлса пыни çинчен калаçнине, канашлусенче сÿтсе-явнине тăтăшах курма пулатчĕ. Анчах кăçал апла мар, чи кайра пынă «Спутник колхозника», «Ыраш», «Çĕнĕ çул» колхозсем йĕркеллĕ ĕçлекен пулчĕç.

Кирек мĕнле ĕçре те ÿсĕмĕн «вăрттăнлăхне» пĕлес килет. Çав «вăрттăнлăх» вăл — палăрмаллах тунă ÿсĕмсенче.

Пуçламĕш парторганизаци масса хушшинче политикăллă ĕçе туса пыма 32 çынран — коммунистсемпе комсомолецсенчен, колхоз активĕнчен агитколлектив организациленĕ, ăна шкул директорĕ коммунист П. Крылов ертсе пырать.

Пĕррехинче парторганизаци секретарĕ М. Алексеев юлташ коммунистсен районри пухăвĕнче сăмах тухса каланăччĕ: «Эпир агитациллĕ ĕçе начар мар йĕркелерĕмĕр. Час-часах канашлусем туса иртерсе, агитаторсене умра тăракан черетлĕ ĕçсене мĕнле пурнăçламалли çинчен каласа кăтартатпăр. Вара агитаторсем массăна çав ĕçсене тума мобилизациллеççĕ. Сăмахран, Иккĕмĕш Военнăй Заема вырнаçтарма тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр. Агитаторсем колхозниксене фронт мĕн хушни çинчен, тăван боецсем пирĕншĕн вăй хурса çапăçни çинчен каласа пачĕç. Çапла майпа эпир правительство постановленийĕ тухнă кунах заема бюджетпа пăхнă суммăран иртерсе вырнаçтартăмăр, укçине те çав кунах пухса çитертĕмĕр. Заем сарас енĕпе районра пĕрремĕш вырăн йышăнтăмăр», тенĕччĕ.

Кунта агитаци ĕçĕн тĕрлĕ формисемпе лайăх усă кураççĕ: хаçатсем вуласа пăраççĕ, Совинформбюро сводкисене ăнлантараççĕ, докладсем, калаçусем иртереççĕ.

Пуçламĕш парторганизаци производствăра малта пыракан çынсене хăйĕн ретне илсех тăрать. Çулталăк пуçламĕшĕнче парторганизацинче 3 коммунист кăна пулнă, халĕ 7 çын. Партие çĕнĕрен илнĕ П. Митряков, П. Матвеев, Н. Матвеев юлташсем ертсе пыракан колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. «Коммунизмшăн» колхозри коммунист К. Никитин ертсе пыракан бригада ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ—авăна срокчен çапса пĕтерчĕ, кĕрхи çĕртме тумалли плана тултарчĕ, тĕрлĕ парăмсене татрĕ.

Пухусем вăхăтра пулса иртеççĕ, кăçал 21 пуху иртгернĕ. Кунта колхоз активне, комсомолецсене уçă пухусене чĕнесси йăлана кĕнĕ. 9 хутчен иртгернĕ уçă пухура чи кирлĕ ыйтусене сÿтсе-явнă. Çакăн пек туни ĕçе лайăхлатма майсем туса пачĕ.

Ялсоветĕнчи колхозсем ялхуçалăхĕнчи ĕçсене вăхăтра туса пычĕç. Государствăна тырă парса татнă хыççăн вĕсем 1944 çулшăн аванс йĕркипе пама тытăнчĕç. Вăрлăх фончĕсемпе страховой фондсене пур колхозсем те хывса хăварнă, ĕçкунĕсем тăрăх тивекен тырра та валеçсе панă. Аш-какай памалли, çавăн пекех ытти обязательствăсене пурне те пурнăçланă, çитес çулшăн пама тытăннă.

Колхозниксем вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене хăюллăн çĕнтерме пултарчĕç. Вĕсене Сталин юлташăн приказĕсем хавхалантарса пычĕç. ВКП(б) членĕн кандидачĕ М. Кушков колхозниксене фронтри ĕçсем çинчен кашни кунах каласа кăтартнă. Малтанхи вăхăтра «Ыраш» колхоз кая юлса пыраканнисенчен пĕриччĕ, унта ĕç дисциплини япăхса кайнăччĕ. Кушков юлташ тата ытти комсомолецсем тăрăшса ĕçленипе, колхоз уборкăна чи малтан вĕçлерĕ, авăн çапса, çĕртме туса пĕтерчĕ, мĕнпур обязательствăсене парса татрĕ, выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленсе çитрĕ. Халĕ вăл районра малта пырать. Колхозри ĕçсене йĕркеллĕ ярас тĕлĕшпе пуçламĕш парторганизаци секретарĕ М. Алексеев нумай вăй хучĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленисĕр пуçне, шефа илнĕ дивизири боецсемпе офицерсем патне парнесем пухса янă. Пĕр госпитале çĕруллми, купăста, ытти пахча-çимĕçсем леçсе панă.

Пуçламĕш парторганизаци коммунистсен политикăллă пĕлĕвĕсене ÿстерес енĕпе те тăрăшса ĕçлет. Коммунистсем Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине вĕренеççĕ, хаçат-журналсем, политикăллă литература вулаççĕ.

Яков СИГАЙ.

СОВЕТСКОЕ

Вăрман хатĕрлевĕнчи фронтовой уйăхлăх

Ишлей колхозникĕсем лайăх ĕçлеççĕ

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Механизациленĕ вăрман пунктĕнче Ишлей, Хĕрлĕ Чутай тата Етĕрне районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем ĕçлеççĕ. Фронтовой уйăхлăх пуçланнăранпа вĕсем ĕç тухăçлăхне куллен ÿстерсе пыраççĕ.

Уйрăмăнах Ишлей районĕнчен килнĕ колхозниксем лайăх ĕçлеççĕ. Унта касакансем 80 çын вырăнне 90 çын, турттаракансем 70 çын вырăнне 73 çын ĕçлеççĕ. «МОПР» колхозран килнĕ колхозник Иван Михайлов кулленхи нормăна 200 процент таран тултарать. Вăрманта ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсенчен нумайĕшĕ ĕç нормине ăнăçлăн тултараççĕ.

Етĕрне районĕ те кая юлмасть. Унти колхозсенчен вăрманта çурран 112 çын ĕçлеççĕ. Нумайĕшĕсем ĕç нормине иртерсе тултараççĕ. Анчах та лашапа ĕçлеме пыракансен хисепĕ çителĕксĕр-ха.

Районри партипе совет организацийĕсем вăрман хатĕрлевĕнче ĕçleme ĕç вăйĕ кирлĕ чухлĕ мобилизацилес тĕлĕшпе халех татăклă улшăнусем тумалла.

Вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ мобилизацилес тĕлĕшпе Хĕрлĕ Чутай районĕ сÿрĕк ĕçлет. Вăл паянхи куна çурран ĕçлеме 110 çын парас вырăнне 99 çын, турттаракансем 100 çын парас вырăнне 10 çын çеç панă. Кун пек сÿрĕклĕхпе килĕшме çук. Ĕç вăйĕ мобилизацилес тĕлĕшпе халех татăклă мерăсем йышăнмалла.

А. УТКИН.

И. Кузьмин юлташ 100 кубометр хатĕрленĕ

ЙЕПРЕÇ. Кăшмаш Туçари вăрман пунктĕнчи рабочисем тата вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем фронтовой уйăхлăха хутшăннăранпа ĕç тухăçлăхне кунсерен ÿстерсе пыраççĕ.

«Победа» колхоз членĕ Евграфов юлташ куллен икĕ норма тултарать. Васильевпа Наумов юлташсем те унтан юлмаççĕ.

Çавăн пекех «Коммунар» колхоз членĕсем Карманская, А. Иванова юлташсем 150—160-шар процентран кая мар тултараççĕ. «Чувашия» колхоз членĕ И. Кузьмин юлташ пĕр уйăх хушшинче 100 кубометр вăрман хатĕрленĕ.

Вăрманпункчĕн коллективĕ 4-мĕш кварталти плана Сталинла Конституци кунĕ тĕлне тултарса çитерме пулнă. Халĕ вăл, хăйĕн обязательствине пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе, кулленхи плана иртерсе тултарать.

(Хамăр инфор.).

Элĕк, Сĕнтĕр тата Çĕмĕрле районĕсем ĕç вăйĕ çителĕклĕ мобилизацилемен

ÇĔМĔРЛЕ, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекен нумай рабочисем тата колхозниксемпе колхозницăсем стахановла ĕç тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ. Çапла, Çĕмĕрле районĕнчи «Красноармеец» колхоз членĕ Баринов тата «Лесной огонек» колхоз членĕ Ермошин юлташсем икшер норма тултараççĕ. Кун пек примерсене татах та илсе кăтартма пулать.

Анчах фронтовой уйăхлăх çителĕксĕр пырать-ха. Мехлесопункт, пĕтĕмĕшпе илсен, хăйĕн планне ăнăçлăн тултараймасть. Плана тултарманни ĕç вăйĕ çителĕксĕр пулнинчен килет. Çĕмĕрле, Элĕк тата Сĕнтĕр районĕсем ку тарана çитсе те вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлеме ĕç вăйĕ çителĕклĕ мобилизацилемен. Сĕнтĕр районĕнчен чугун çул валли вутă хатĕрленĕ çĕрте çурран 80 çын, лашапа 80 çын ĕçлемелле пулсан, хальхи вăхăтра çурран 54 çын, лашапа 62 çын çеç ĕçлеççĕ. Элĕк тата Çĕмĕрле районĕсенче те савăн евĕрлех.

Вăрман хатĕрлемелли плана тултарасси—вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен пысăк вырăнта тăракан ответлă задача. Районсенчи партипе совет организацисен вăл ĕçе ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе куллен тимлĕн ĕçлемелле.

М. КЛЯЧКИН.

Ют çĕршывсенче

США-ри поляк организацийĕсем калани

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). (Вăхăтра çитермен). Детройтра поляк чĕлхипе тухакан «Глос людовы» ятлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 7-мĕшĕнче Детройтра конференци пулса иртнĕ. Çав конференцие Америкăра пурăнакан 300 поляк пулнă, вĕсем унта поляксен тĕрлĕ организацийĕсенчен пынă.

Конференци деклараци йышăннă. Çав декларацире çапла каланă:

«Эпир, Америкăра пурăнакан поляксем, ноябрĕн 7-мĕшĕнче Детройтри конференцие пухăннăскерсем, çапла калатпăр: Пĕрлешÿллĕ нацисем фашизма хирĕç тăвакан çак вăрçăра эпир хамăрăн Рузвельт правительствине пĕр сăмахсăр пулăшатпăр. Эпир президентăн политикине пĕтĕм чунтан-чĕререн ырлатпăр. Пĕрлешÿллĕ нацисен шутне кĕрекен чи пысăк государствăсен представителĕсемпе пĕрле ĕçлесе, вăл фашистла çĕршывсене хирĕç кĕрешекен чи вăйлă çĕршывсем пĕр-пĕрне вăрçă вăхăтĕнче те, вăрçă хыççăнхи тапхăрта та ăнланса пурăнмалла турĕ. Мускаври конференци, фашизма хирĕç пĕрле килĕштерсе кĕрешнине кăтартса панăскер, вăрçа часрах пĕтермелли тата демократиллĕ мир тумалли плансене çырса хатĕрлерĕ».

«Вăрçăра çĕнтермешкĕн тата мир тумашкăн СССР-ĕн, США-н тата Англин пĕрле килĕштерсе ĕçлемелле пулсан, — тенĕ декларацире, — Польшăн вăрçă Совет Союзĕпе пушшех те килĕштерсе ĕçлемелле. Вăрçă вăхăтĕнче пĕр-пĕринпе туслă пурăнса, пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе тачăн çыхăнса, çирĕп союзлă пулса ĕçлесси Совет Союзĕпе Польша хушшинчи çыхăнусенче чи малти вырăнта тăмалла. Поляксен армийĕ, Хĕвелтухăç фронтĕнче вырăссемпе пĕрле çапăçни поляк нацийĕн историйĕнче тата вăл украинецсемпе, белоруссемпе, вырăссемпе тытса пынă çыхăнăвăн историйĕнче чи пысăк событисенчен пĕри пулса тăрать тесе шутлатпăр эпир. Костюшко ячĕпе тăракан дивизи поляк нацийĕн историне çĕнĕ страница çырса хурать. Çак страница вăл Совет Союзĕпе Польша çапăçу хирĕнче пĕрлешÿ юн юхтарса кĕрешнине кăтартакан страница пулса тăрать, çапла килĕштерсе ĕçлени вăл ĕлĕкхи тавлашусене пĕтĕмпех асран ярать.

Чăн-чăн поляк патриочĕсем пурте демократиллĕ тата тĕрĕслĕхлĕ Польша тăвассишĕн кĕрешеççĕ. Çав Польша вăл ют çĕрсене тытса илнипе мар вăйлă пулĕ, вăл хăйĕн мĕнпур союзникĕсемпе туслă пурăннипе пула вăйлă пулĕ».

Декларацире тата çапла каланă: «Польша правительстви реакци тыткăнĕнче тăрать. Реакци правительство, дипломати тата çар аппарачĕсенче пуç пулса тăрать. Хальхи вăхăтра Польша правительстви Польшăн наци интересĕсене хÿтĕлемест. Çавна пула ĕнтĕ Совет Союзĕнчи поляксен корпусĕ тата Польшăн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешекен Польшăри партизансем поляксен наци интересĕсемшĕн тата Пĕрлешÿллĕ нацисемпе пĕр шухăшлă пулса кĕрешекенсем пулса тăраççĕ».

Англире хĕçпăшал туса кăларас ĕç ÿссе пыни

ЛИТТЛТОН ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, çар производствин министрĕ Литтлтон Çурçĕр Ирландири çар завочĕсене пăхса тухнă хыççăн çапла каланă: халĕ Англире хĕçпăшал туса кăларас ĕç нихçанхинчен те вăйлăрах пулса пырать, тенĕ.

«Халĕ, —тенĕ Литтлтон, — пуçарулăх пĕтĕмĕшпех пирĕн алăра, çав пуçарулăха пирĕн хамăр аларан вĕçертмелле мар. Халĕ ĕнтĕ вăхăт çитрĕ — нимĕçсене хăваласа пырса вĕсене хĕçпăшал ытлараххипе пĕтерсе тăкмалла. Пирĕн çар завочĕсем туса кăларакан кашни ытлашши хĕçпăшал, кашни çĕнĕ йышши оборудовани эпир хĕсме пултаракан пусăма вăйлатса пыраççĕ. Пирĕн умра халĕ çакăн пек задача тăрать: Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи катастрофăсене пула питĕ вăйлă хавшанă Германие уяраран ÿкичченех халран ямалла. Пĕрлешÿллĕ Королевствăри рабочисене эпĕ çапла калатăп: пĕтĕм вăя ним юлмиччен хăвармасăр хурса ĕçлес самант çитрĕ. Ĕçе вĕçлемелли самант çитрĕ, çак самант вăл пире çĕнтерÿ патне илсе çитерет»

ИТАЛИ ХАЛĂХĔ ГИТЛЕРЛА ОККУПАНТСЕМПЕ КĔРЕШНИ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцари хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Понте-Тереза ятлă хулара нумаях пулмасть баррикадăсем туса лартнă. Итали салтакĕсем хушшинче хĕçпăшаллă тытăçусем пулса иртнĕ. Икĕ пин нимĕç салтакĕ çав казармăсене çавăрса илнĕ те пеме пуçланă. Çапăçу темиçе сехет пынă. Унтан нимĕç бомбардировщикĕсем вĕçсе пынă. Çав бомбардировщиксем пăрахнă бомбăсене пула казармăсенчен ишĕлчĕк кăна тăрса юлнă. Çавăрса илнĕ итальянецсен пĕр пайĕ çапах та унка татса тухнă, вара вĕсенчен нумайĕшĕ Швейцари чикки урлă каçнă.

ФРАНЦИРИ ЗАБАСТОВКĂСЕМ

БРАЗЗАВИЛЬ, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Браззавильти радио çапла пĕлтерет: юлашки вăхăтра Францире рабочисем чылай хуласенче пысăк забастовкăсем туса иртгернĕ. Пюи-де Дом департаментĕнче 5.000 рабочи забастовка тунă, вĕсем гитлеровецсем темиçе рабочие тытса хупнине хирĕç протестленĕ. Çавăн пекех тата Лион хулинчи тĕрлĕ предприятисенче пысăк забастовкăсем пулса иртнĕ. Марсель хулинче хими предприятийĕсенчи рабочисем ĕçлеме пăрахнă.

ЛĂПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тинĕс министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка çарĕсем Апамама утравĕсем (Гилберт утравĕсем) çине анса юлнă. Тарава утравĕсем çинче Америка çарĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Макин утравне союзниксен çарĕсем пĕтĕмĕшпех йышăнса илнĕ.

США-ра ОКТЯБРЬ УЙĂХĔНЧЕ ТУСА КĂЛАРНĂ ÇАР ХАТĔРĔСЕМ

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: октябрь уйăхĕнче США-ра çар хатĕрĕсене сентябрь уйăхĕнчинчен чылай ытларах туса кăларнă. Юлашки çур çул хушшинче ун пек нумай туса кăларни пулман.

Октябрь уйăхĕнче мĕн пурĕ 8.362 самолет туса кăларнă. Уйăхра ун чухлĕ туса кăларни ку таранччен пулман. Сентябрь уйăхĕпе танлаштарсан, вăл 10 процент ытларах пулать.

Суднăсем туса кăларасси 5 процент ÿснĕ, боеприпассем туса кăларасси 11 процент ÿснĕ.

Хăшпĕр хĕçпăшалсене, сăмахран танксене, планра кăтартнинчен 9—11 процент сахалтарах туса кăларнă.

Автомашинăсемпе тракторсене планра кăтартнинчен ытларах туса кăларнă.

Çавăн пекех тата суднăсем туса кăларасси те планран ытларах пулнă, октябрь уйăхĕнче суднăсем 1.660 пин тоннăллăх туса кăларнă.

Кăçалхи вунă уйăх хушшинче суднăсене мĕн пурĕ 15.332 пин тоннăлăх туса кăларнă. Çакă вăл планра кăтартнин 80 процентне яхăн пулать. 1943 çулта суднăсене мĕн пурĕ 19 миллион тоннăлăх туса кăлармалла.

ХРОНИКА

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **М. И. Алиев** юлташа Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ пулма уйăрса лартнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Местькомпа пуçламĕш парторганизаци «Чăваш Коммуни» хаçат редакцийĕн ялхуçалăх пайĕн заведующийĕн Н. Н. Петрова юлташăн ашшĕ **НИКИТА ПЕТРОВИЧ ПЕТРОВ** вилнĕ пирки çемьипе пĕрле хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Чăвашторгăн Шупашкар хулинчи отделенийĕ—„Чебторг"—комиссионнăй магазина япаласем панине кăтартакан квитанцисене пурне те тепĕр хут тĕрĕслесе тухать. Çавăнпа та магазина панă япаласен хуçисем алăри квитанцисене ноябрĕн 30-мĕш числинчен Чебторга пырса кăтартмалла. Пырса палла тутарман квитанцисене çав числоран кайран пурне те тĕрĕс мар тесе шутлаççĕ.

ЧЕБТОРГ.

Чебторгăн сĕтел-пукан тăвакан мастерскойне производствăна вĕренме ученик-сем-столярсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 11, Отдел кадров Чебторга. 2—1.

Вăрман сыхласа усракан тата вăрман лартса ÿстерекен Чăваш Управленин ОРС-не çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: агроном, инспекторсем, делопроизводитель-машинистка, плановăй сектор начальникĕ, бухгалтерсем, ревизор-инвентаризатор, счетовод-кассир инкассатор.

Адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 36. 2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1880 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6 53 84 п. л. Тираж 14.100 экз.